ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТЕРРИТОРИЙĔНЧЕ УЙРĂМ КАТЕГОРИРИ ГРАЖДАНСЕНЕ ÇĔР ЛАПТĂКĔСЕНЕ ХАРПĂРЛĂХА ТӰЛЕВСĔР УЙĂРСА ПАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУНĔН 3 ТАТА 5 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин территорийĕнче уйрăм категорири граждансене çĕр лаптăкĕсене харпăрлăха тӳлевсĕр уйăрса парасси çинчен" 2023 çулхи чӳк уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 82 №-лĕ саккунне ("Республика" хаçат, 2023, чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 3 статьян 1-мĕш пайĕн иккĕмĕш абзацне "Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсем" сăмахсем хыççăн "(Раççей Федерацийĕн наци гвардийĕн çарĕсем)" сăмахсем хушса хурас;

2) 5 статьян 4-мĕш пайĕн пиллĕкмĕш абзацне "Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсем" сăмахсем хыççăн "(Раççей Федерацийĕн наци гвардийĕн çарĕсем)" сăмахсем хушса хурас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О.Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕ
51 №